Сывă пултăр Майăн 1-мĕшĕ—ĕççыннисен кĕрешӳри вăйĕсене пăхса тухмалли кун!
Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем, фашистла нимĕç захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкассишĕн кĕрешме пĕрлешĕр!

27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 МАЙ 1 ГУНТИКУН 87 (6582) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Верховный Главнокомандующин ПРИКАЗĔ

1944 çулхи майăн 1-мĕшĕ. *№ 70.* *Мускав хули.*

Юлташсем — красноармеецсемпе краснофлотецсем, сержантсем, офицерсемпе генералсем, партизансемпе партизанкăсем! Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! Нимĕç пусмăрçисен аллине вăхăтлăха лекнĕ тата Германие фашистла каторгăна вăйпа хăваласа кайнă тăвансем!

Совет Правительствипе пирĕн большевиксен партийĕ ячĕпе Сире Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе ырă сунса саламлатăп!

Пирĕн çĕршыври халăхсем Майăн 1-мĕшне Хĕрлĕ Çар чаллăран та чаплă çитĕнӳсем тунă вăхăтра кĕтсе илеççĕ.

Нимĕç дивизийĕсене Сталинград патĕнче аркатса тăкнăранпа Хĕрлĕ Çар пĕр чарăнмасăр тенĕ пекех наступлени туса пырать. Çак вăхăт хушшинче Хĕрлĕ Çар тăшманпа çапăçса Атăл шывĕнчен Серет шывĕ патне, Кавказ тăвĕсем патĕнчен Карпат патне çитрĕ, ирсĕр тăшмана пĕтерсе, совет çĕрĕ çинчен шăлса тасатса пычĕ.

1943—44 çулхи хĕллехи кампанире Хĕрлĕ Çар Днепрпа Сылтăм енчи Украинăшăн пынă историллĕ çапăçура çĕнтерчĕ, нимĕçсен Ленинград патĕнчи тата Крымри калама çук хăватлă оборона укреплениййĕсене аркатса тăкрĕ, вăрçă ĕçĕсене пĕлсе те хăвăрт туса пырса, нимĕçсен Кăнтăр Буг, Днестр, Прут, Серет шывĕсем хĕрринчи оборонине çĕнтерчĕ. Пĕтĕм Украинăна тенĕ пекех, Молдавие, Крыма, Ленинградпа Калинин облаçĕсене, Белоруссин чылай пысăк пайне нимĕç захватчикĕсенчен тасатнă. Кăнтăрти металлургие, Криворожье, Керчь тата Никополь рудине, Днепрпа Прут шывĕсем хушшинчи тырă лайăх пулакан çĕрсене хамăрăн Тăван çĕршыва тавăрса панă. Темиçе вунă миллион совет çыннине фашистла чуралăхран ирĕке кăларнă.

Тăван çĕре фашистла захватчиксенчен ирĕке кăларас çак аслă ĕçе пурнăçласа пырса, Хĕрлĕ Çар пирĕн государствăн Румынипе Чехословаки хушшинчи чиккисене тухрĕ, халь вăл тăшман çарĕсене Румыни территоринче аркатса пырать.

Хĕрлĕ Çар совет командованийĕн тĕрĕс стратегийĕпе тактикине пула, пирĕн боецсемпе командирсен шухăш-кăмăлĕсем çав тери лайăх пулнипе тата вĕсен наступлени тăвас кăмăлĕпе хăвачĕ вăйлă пулнипе, пирĕн çарсене советсен малта тăракан çар техникипе лайăх хĕçпăшаллантарнине пула, пирĕн артиллеристсен, минометчиксен, танкистсен, летчиксен, связистсен, саперсен, пехотинецсен, кавалеристсен, разведчиксен ăсталăхĕпе хăнăхăвĕ ӳснине пула çитĕнӳсем тума пултарчĕ.

Çак çитĕнӳсене тума пирĕн аслă союзниксем—Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Великобритани чылай пулăшрĕç. Вĕсем, Италире нимĕçсене хирĕç фронт тытса, нимĕçсен пирĕнпе çапăçас çарĕсен чылай пысăк пайне хăйсем патĕнче чарса тăраççĕ, пире стратеги тĕлĕшпе питĕ паха чĕртавар тата хĕçпăшал параççĕ, Германин çар объекчĕсем çине тăтăшах бомбăсем пăрахаççĕ, çапла майпа вĕсем Германин çар хăватне хавшатаççĕ.

Анчах та Хĕрлĕ Çара тылран пирĕн пĕтĕм совет халăхĕ, пирĕн пĕтĕм çĕршыв тĕрек парса пулăшса тăман пулсан, Хĕрлĕ Çарăн ăнăçăвĕсем çирĕп пулман пулĕччĕç, тăшман пире хирĕç пĕрре вăйлă пырса çапсанах вĕсем пĕтсе ларнă пулĕччĕç. Хамăр Тăван çĕршывшăн пынă çапăçусенче Хĕрлĕ Çар халиччен нихăçан пулман паттăрлăх кăтартрĕ. Анчах совет халăхĕ те Хĕрлĕ Çар умĕнче парăмра юлмарĕ. Совет халăхĕ вăрçăн йывăр условийĕсенче хĕçпăшал, огнеприпас, тумтир, апат-çимĕç йышлăн туса кăларас тата вĕсене Хĕрлĕ Çарăн фрончĕсене вăхăтра çитерес ĕçре татăклă çитĕнӳсем турĕ. Иртнĕ çулталăк хушшинче совет промышленноçĕн хăвачĕ нумай ӳсрĕ. Темиçе çĕр çĕнĕ завода, çĕнĕ шахтăсене, вунşар электростанцие, чугун çулсене, кĕперсене туса пĕтерсе ĕçе янă. Çĕнĕрен темиçе миллион совет çынни станоксем умне тăчĕç, питĕ кăткăс профессисене вĕренсе алла илчĕç, хăйсен ĕçĕн ăстисем пуласа тăчĕç. Вăрçă йывăрлăхĕсене пирĕн колхозсемпе совхозсем чыслăн тӳссе ирттерчĕç. Совет хресченĕсем вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче уйхирсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ, пирĕн çарпа халăха апат-çимĕç, промышленноçа — чĕртавар парса тăраççĕ. Пирĕн интеллигенци совет наукипе техникине, культурипе искусствине çĕнĕрен калама çук чаплă çитĕнӳсемпе открытисем туса пуянлатрĕ. Тăван çĕршыва хӳтĕлес ĕçре совет хĕрарăмĕсем çав тери паха ĕçсем тăваççĕ, вĕсем фронтшăн хăйсен пурнăçне шеллемесĕр ĕçлеççĕ, вăрçă вăхăтĕнчи мĕнпур йывăрлăхсене хастарлăн тӳссе ирттереççĕ, Хĕрлĕ Çарăн воинĕсене— пирĕн Тăван çĕршыва ирĕке кăларакансене — çапăçура чаплă ĕçсем тума хавхалантараççĕ.

Отечественнăй вăрçă çакна кăтартса пачĕ: совет халăхĕ питех те тĕлĕнмелле ĕçсем тума, чи йывăр условисенчен те çĕнтерсе тухма пултарать. Рабочисемпе колхозниксем, совет интеллигенцийĕ, пĕтĕм совет халăхĕ тăшмана аркатса тăкассине хăвăртлатма, фашистсем ишĕлтернĕ пĕтĕм хуçалăха юсаса йĕркелеме, хамăр çĕршыва вăйлăрах та пуянрах тума пĕтĕм вăйпа тăрăшаççĕ.

Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе фашистла государствăсен союзĕ арканса пырать. Гитлерăн «союзникĕсем» — Румыни, Венгри, Финлянди тата Болгари — хăраса ӳксе чĕтрене ернĕ. Халĕ Гитлерăн çак хӳрешкисем (хăйсен çĕршывне нимĕçсем оккупациленĕ е оккупацилеççĕ) Германи вăрçăра аяла пулнине курмасăр тăма пултараймаççĕ. Румынин, Венгрин, Финляндин тата Болгарин хăйсем пĕтĕмпех пĕтсе ларасран çăлăнса юлма пĕр май çеç пур: вĕсен нимĕçсемпе çыхăнма пăрахса вăрçăран тухмалла. Анчах та çав çĕршывсен хальхи правительствисем нимĕçсемпе çыхăнма пăрахĕç тесе шутлама хĕн. Çав çĕршывсенчи халăхсен нимĕç пусмăрлăхĕнчен ирĕке тухас ĕçе хăйсен аллине илес пулать. Çав çĕршывсен халăхĕсем хăйсене гитлеровецсем путлăха сĕтĕрсе кĕнине мĕн чухлĕ хăвăртрах ăнланса илĕç, хăйсене пусмăрлакан нимĕçсемпе вĕсен хӳрешкисене — хăйсен çĕршывĕнчи квислинговецсене — пулăшма мĕн чухлĕ хăвăртрах чарăнĕç, — вĕсен çĕршывĕсем вăрçăра çавăн чухлĕ сахалтарах çухатусем тӳсĕç, сахалтарах ишĕлĕç, вĕсем демократиллĕ çĕршывсем хăйсене ăнланассине çавăн чухлĕ ытларах шанса тăма пултараççĕ.

Хĕрлĕ Çар, ăнăçлă наступлени туса пырса, 400 километр ытла участокра хамăрăн государство чиккине тухрĕ, пирĕн оккупациленĕ çĕрĕн 3/4 пайне ытла фашистла нимĕç пусмăрлăхĕнчен ирĕке кăларчĕ. Халĕ ĕç çакăнта тăрать: пирĕн хамăрăн çĕре фашистла захватчиксенчен ПĔТĔМĔШПЕХ тасатмалла, Совет Союзĕн Государство чиккине ПĔТĔМ ТĂРШШĔПЕХ — Хура тинĕсрен пуçласа Баренц тинĕсне çитиччченех — вăрçăччēнхи вырăнне лартмалла.

Анчах та пирĕн задачăсем тăшман çарĕсене хамăр Тăван çĕршывран хăваласа кăларнипех пĕтмеççĕ-ха. Тискер кайăк аманнă хыççăн суранĕсене сыватас тесе хăй шăтăкĕ патнелле шуса пынă пек, нимĕç çарĕсен халĕ, Германи чикки патнелле упаленме тивет. Анчах та хăй шăтăкне кĕрсе выртнă аманнă тискер кайăк çаплипех хăрушă тискер кайăк пулма пăрахмасть. Хамăр çĕршыва тата пирĕнпе союзлă çĕршывсене чуралантарас хăрушлăхран хăтарас тесен, аманнă нимĕç тискер кайăкна хыçранах хăваласа пырса, ăна хăйĕн шăтăкĕнчех вĕлермелле. Тăшмана хăваласа пырса, пирĕн хамăрăн тăвансене — поляксене, чехословаксене тата Хĕвеланăç Европăри хамăрпа союзлă ытти халăхсене, гитлерла Германи ури айĕнче асапланса пурăнакансене, нимĕç пусмăрлăхĕнчен ирĕке кăлармалла.

Паллах ĕнтĕ, çак задача вăл нимĕç çарĕсене Совет Союзĕнчен хăваласа кăларассинчен йывăртарах. Ăна Совет Союзĕ, Великобритани тата Çурçĕр Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем пĕрлешсе кĕрешнипе, хĕвелтухăç енчен пирĕн çарсем, хĕвеланăç енчен — пирĕн союзниксен çарĕсем пыра-пыра çапнипе татса пама пулать. Çапла пĕрлешсе çапсан çеç гитлерла Германие пĕтĕмпех аркатса тăкма пулать, ун пирки иккĕленмелли çук.

Юлташсем — красноармеецсемпе краснофлотецсем, сержантсем, офицерсемпе генералсем, партизансемпе партизанкăсем! Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! Нимĕç пусмăрçисен аллине вăхăтлăха лекнĕ тата Германие фашистла каторгăна вăйпа хăваласа кайнă тăвансем! СИРЕ МАЙĂН 1-МĔШĔ ЯЧĔПЕ ЫРĂ СУНСА САЛАМЛАТĂП!

ÇАПЛА ХУШАТĂП:

Хĕрлĕ Çар фронтра историллĕ çĕнтерӳсем тунă ятпа тата Совет Союзĕнчи рабочисем, колхозниксем, интеллигенци тылра тунă чаплă çитĕнӳсене палăртас шутпа, паян, ĕççыннисен пĕтĕм тĕнчери уявĕ кунĕнче, 20 сехетре, Мускавра, Ленинградра, Гомельте, Киевра, Харьковра, Ростовра, Тбилисире, Симферопольте, Одессăра — артиллерирен сирĕм хут пĕр харăс персе салют памалла.

СЫВĂ ПУЛТĂР ПИРĔН СОВЕТ ÇĔРШЫВĔ!
СЫВĂ ПУЛТĂР ПИРĔН ХĔРЛĔ ÇАРПА ТИНĔС-ÇАР ФЛОЧĔ!
СЫВĂ ПУЛТĂР АСЛĂ СОВЕТ ХАЛĂХĔ!
СЫВĂ ПУЛТĂР СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ ХАЛĂХСЕН ТУСЛĂХĔ!
СЫВĂ ПУЛЧЧĂР СОВЕТ ПАРТИЗАНĔСЕМПЕ ПАРТИЗАНКИСЕМ!
ХАМĂРĂН ТĂВАН ÇĔРШЫВĂН ИРĔКЛĔХĔПЕ НИКАМА ПĂХĂНМАНЛĂХĔШĔН ÇАПĂÇСА ВИЛНĔ ГЕРОЙСЕНЕ ĔМĔР-ĔМĔР МУХТАВ!
НИМĔÇ ЗАХВАТЧИКĔСЕНЕ — ВИЛĔМ!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Çĕмĕрле комбинатĕнчи рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлаççи çинчен

(Малалли. Пуçламĕш «Чăваш Коммунин» 86-мĕш номерĕнче).

10. Петр Александрович Велединские—медника.
11. Иван Федорович Вишневские—отдел начальникне.
12. Иван Евлампьевич Волкова — слесаре.
13. Михаил Иванович Волкова—ВКП(б) Çĕмĕрле райком секретарĕн промышленноçпа транспорт енĕпе ĕçлекен заместительне.
14. Павел Павлович Гарусова.
15. Петр Николаевич Голубкова—завод директорне.
16. Василий Данилович Данилова—старши мастера.
17. Яков Павлович Дашевские — отдел начальникне.
18. Павел Яковлевич Дмитриева — цех начальникне.
19. Семен Иванович Ефремова — слесаре.
20. Иван Петрович Жидкова — отдел начальникне.
21. Осип Петрович Захарова — заводри пушар охранин начальникне.
22. Василий Иванович Иванова — цех начальникне.
23. Елена Ивановна Ивановăна — мастера.
24. Петр Илларионович Илларионова — заводри комитет председательне
25. Степан Иванович Кабаева — главнăй механикне.
26. Василий Егорович Коршунова — цех начальникĕн заместительне.
27. Осипатор Владимирович Кирилкова —слесаре.
28. Иван Алексеевич Китаева—слесаре.
29. Виктор Михайлович Клюгарева — отдел начальникне.
30. Александр Иосифович Курсанова — чернорабочие.
31. Иосиф Яковлевич Левина — директор заместительне
32. Яков Моисеевич Лернера — отдел начальникне.
33. Семен Васильевич Лещева — плотнике.
34. Сергей Михайлович Лобашова — слесаре.
35. Иван Гаврилович Ломтева—токаре.
36. Елена Александровна Лукинана — маляра.
37. Аркадий Алексеевич Лукомские — мастера.
38. Михаил Иосифович Любанские—заводри партбюро секретарьне.
39. Дмитрий Яковлевич Малышева — завод директорĕн помощникне.
40. Нина Акимовна Мигуновăна — слесаре.
41. Александр Федорович Миронова — цех начальникне.
42. Андрей Алексеевич Миронова — столяра.
43. Кирилл Михайлович Михайлова — слесаре.
44. Нестер Пимонович Московченкăна —цех начальникне.
45. Тимофей Семенович Назарова—цех начальникне.
46. Петр Григорьевич Новикова—мастера.
47. Петр Николаевич Пастухова—слесаре.
48. Георгий Андреевич Поваренныха — отдел начальникне.
49. Михаил Николаевич Пономарева — главнăй бухгалтера.
50. Вера Федоровна Скорынинăка — штамповщицăна.
51. Григорий Андреевич Станевские — отдел начальникне.
52. Петр Николаевич Тарганова—электрика.
53. Христофор Георгиевич Хачатурова—главнăй технолога.

(Юлашки пулать).

Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе Шупашкарта пулса иртнĕ чаплă лару

Апрелĕн 30-мĕшĕнче Шупашкарта, Советсен Çурчĕн ларусем пулакан залĕнче, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аслă уявĕ —Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе партипе совет, профсоюз тата обществăллă организацисен, хулари предприятисенчи стахановецсен чаплă ларăвĕ пулса иртрĕ.

Чаплă ларăва пухăннисем хисеплĕ президиума, тăвăллăн алă çупса, пысăк хаваслăхпа Верховный Главнокомандующие, Совет Союзĕн Маршалне И. В. Сталин юлташа тата унăн çывăх юлташĕсене— Молотов, Ворошилов, Калинин, Каганович, Андреев, Микоян, Жданов, Хрущев, Шверник, Берия, Вознесенский, Щербаков, Маленков юлташсене суйларĕç.

Майăн 1-мĕшĕ — пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен кĕрешӳри вăйĕсене пăхса тухмалли кун çинчен ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Андреев юлташ доклад туса пачĕ.

Чаплă лару пысăк çĕкленӳпе, тăвăллăн ала çупса, Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Иосиф Виссарионович Сталин юлташ патне ямалли саламлă çырăва йышăнчĕ.

Планран ирттерсе продукци параççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ, апрелĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри предприятисемпе промысла коопераци артелĕсен коллективĕсем май уявĕ умĕнхи ăмăртура çĕнĕ ӳсĕмсем турĕç. Кайри Шĕнерпуçĕнчи «Деревообделочник» артель коллективĕ апрель уйăхĕнче 20 кун хушшинче плана пĕтĕм продукци туса кăларас енĕпе 107 процент, кусмен кирлĕ таварсем туса кăларас енĕпе 156 процент тултарнă. Халь вăл планран ирттерсе продукци туса кăларать. Артельти стахановецсем З. Прокопьева, А. Павлова, А. Давыдова тата ытти чылай юлташсем ĕç нормине кулленех 150-шар процент ытла тултараççĕ. Артель коллективĕ хăйĕн умне çур çулхи плана ирттерсе тултарас задача лартнă.

«Крестьянский кузнец» артельти пумай рабочисем май уявне ĕç тухăçлăхне ик-виçĕ хут ӳстерсе кĕтсе илчĕç.

Ф. ИЛЬИН.

Совет Информаци Бюровěнчен

АПРЕЛĚН 29-МĚШĚНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелěн 29-мěшěнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Апрелěн 28-мěшěнче пирěн çарсем мěнпур фронтсенче нимěçсен 28 танкне сěмěрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 71 самолетне персе ÿкернě.

☆ ☆ ☆

ХУРА ТИНĚС ФЛОЧĚН КАРАПĚСЕМ ТĂШМАНĂН СЕВАСТОПОЛЬ РАЙОНĚНЧИ СУДНИСЕНЕ ПЫРА-ПЫРА ÇАПНИ

Хура тинěс флочěн карапěсем çěрле Севастополь районěнче тăшман суднисен икě ушкăнне асăрханă. Пěр ушкăнне Казачья бухтинчен тухнă чухне атакăланă. Тепěр ушкăнěнче 2 транспорт, пěр тральщик тата хурал катерěсем пулнă. Вăл ушкăна Херсонес маякě районěнче пирěн карапсем курнă, вăл хěвеланăçнелле кайнă. Пирěн карапсем пырса çапнине пула тăшманăн пěтěмěшпе 11.000 тоннăна çити таякан 3 транспортне шыва путарнă. Унсăр пуçне тата тепěр хурал катерне путарнă, сыхласа пыракан ытти суднисене сиенленě.

* * *

Станиславă хулинчен кăнтăр-хěвелтухăçнерехре пěр соединени чаçěсем тăшман танкěсемпе пехотин темиçе атакине сирсе янă. Çав çапăçура гитлеровецсене пěр батальона çити вěлерсе пěтернě тата нимěçсен 6 танкне пěтерсе тăкнă. Бронебойщик Тайгель Аухадиев кун каçиччен нимěçсен 2 танкне персе сěмěрнě. Иван Фирсов гвардеецăн расчечě, тăшман персе тăнине пăхмасăр, нимěçсен флангне пырса тухнă. Гитлеровецсем атака тума пуçласан, пирěн çав пулеметчиксем нимěçсене хыçалтан пырса çапнă. Гитлеровецсен атаки путланса ларнă. Çапăçу хирěнче тăшманăн 120 вилли выртса юлнă.

Гварди майорě Катнов командир пулса ертсе пыракан подразделенири совет летчикěсем тăшман танкěсемпе автомашинисем капланса тăнă вырăнсене бомбăсем пăрахнă. Хěвел енчен вěçсе кěрсе, пирěн бомбардировщиксем тěллев çине сасартăк пырса тухнă та тăшмана йывăр сухатусем кўнě. Пирěн авиаци кун каçиччен нимěçсен темиçе танкне, хăй тěллěн сўрекен 5 тупăпине тата çар хатěрěсем турттарса пыракан 100 автомашинине ытла пěтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче нимěçсен 13 самолетне персе ÿкернě.

* * *

Балтика сывăхěнчи 2-мěш фронтра пирěн штурмовиксемпе истребительсем Грехниковпа Савченко старши лейтенантсем тата Орден лейтенант командир пулса ертсе пынипе, тăшман аэродромне тапăннă. Разведка пěлтернě тăрăх, çав аэродромра тěрлě йышши 60 самолет тăнă. Совет летчикěсем сасартăк тата çав тери хăвăрт атакăланă та нимěçсен аэродромра пулнă 11 самолетне пěтерсе тăкнă. Тата унсăр пуçне аэродром тěлěнче пулса иртнě сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 10 самолетне персе ÿкернě.

* * *

Апрелěн 29-мěшě ыран тенě чух çěрле Баренц тинěсěнче тăшманăн хăй тěллěн сўрекен икě баржине асăрханă. Вěсене 4 катер сыхласа пынă. Пирěн торпеда пăрахакан катерсен отрячě Лозовский капитан-лейтенант командир пулса ертсе пынипе, çав судносене атакăланă, икě баржине те шыва путарнă. Артиллери нимěçсен хуралти пěр катерне сиенленě.

* * *

Çак кунсенче Станислав хули районěнче [illegible] венгр салтакěсен [illegible] ушкăнě [illegible]. Вěсем çапла каласа кăтартнă: «Пире совет позицийěсене атакăлама приказ пачěç. [illegible] Вырăссем пирěн çине [illegible]

Пěчěккěн-пěчěккěн чупа-чупа кайса, салтаксем танксене чарма алтнă шăтăка пытанчěç те вырăссем енне куçма шут тытрěç. Эпир 8 çынна, хěçпăшалěсене пăрахтарса, вырăссем патне калаçма ятăмăр. Часах пирěн çынсем пěр совет офицерěпе пěрле каялла килчěç. Эпир алăри хěçпăшала çав офицера патăмăр та пěчěк ушкăнсене пайланса вырăссем патне куçрăмăр».

Тепěр участокра Хěрлě Çар енне венгрсен 19-мěш полкěн 2-мěш пулеметнăй ротинчен пěр салтак Хěрлě Çар енне куçнă. Вăл лавпа килнě, хăйпе пěрле пěтěмěшпех юсавлă 2 станковăй пулемет тата 5.000 патрон илсе килнě. Вăл çапла каласа кăтартнă: «Мана 1944 çулхи мартăн 13-мěшěнче çара илчěç. Нимěçсем Венгрие пěр чарăнса тăмасăр çаратаççě, нимěçсěр тăратса хăвараççě. Эпě хам юна Гитлершăн тăкма килěшмерěм. Вăрçас пулсан та эпě нимěçсем майлă вăрçас çук, вěсене хирěç вăрçмалла. Эпě нимěçсене чун-чěререн курайманстăп, вěсем Венгрине хайсен колонийě туса хучěç».

* * *

Винница облаçěнчи Гайсин хулинчи çынсем фашистла нимěç ирсěрěсем тунă тискер ěçсем çинчен акт çырнă. Актра çапла каланă: Хайсем пуç пулса тăнă вăхăтра нимěç ирсěрěсем Гайсин хулипе Гайсин районěнчи мирлě халăха 10.000 çынна ытла персе пăрахрěç е асаплантарса вěлерчěç. Вěсем совет çыннисене Белендинка рашчинче, Гайсин хуторěсенче тата вăрманта вěлерсе пурăнчěç. Гитлеровецсем мирлě совет çыннисене хăйсене кунтан хăваласа кăлариччен юлашки кунччченех вěлерсе пычěç. Гитлеровецсем совет çыннисене ытла та тискеррěн асаплантарчěç. Тимофей Панчукпа Петр Бобура нимěçсем чěрěллех çунтарса ячěç. Фадей Шерб инженера гитлеровецсем çав тери асаплантарса пěтернипе унăн тăванěсем аиа тăрса юлнă кěпе татăкěнчен кăна палласа илме пултарнă. Гайсин хуторěсенче нимěç фашисчěсен вăрă-хурахěсем 1944 çулхи февралěн 14-мěшěнче [illegible] Степан Тарлецкий, Ольга Лиханова[illegible] унăн 3 ачи, Яков Юрьевич [illegible] тата [illegible] Жорж Гали, 5 çулхи ывăлě Жорж тата ыттисем те пěтнě. [illegible] нимěçсем Гайсин районěнчен 3.200 çынна Германие каторгăна хăваласа кайнă.

Çак калама çук тискер ěçсемшěн [illegible] Хабер, унăн заместителě Ротенбахер тата [illegible] комендантě Гиммель.

Акта çине çаксем алă пуснă: доктор А. Оржеховский, священник Б. Зарасинский, [illegible] Д. Галузинский, Л. Шварцштейн, А. Главацкий.

Фронтпа çěршыв валли тырпул, аш-какай, промышленноçа—чěртавар ытларах туса парар!

ШУПАШКАР

Чăваш АССР Çěрěç Халăх Комиссарне ***МАЛОВА***

Сирěн республикăри Вăрнар районне 1943 çулта вăйлă тырпул туса илес тěлěшпе Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилеме тата культурăпа йăла ěçěсем валли укçаллă ИККĚМĚШ ПРЕМИ — 150.000 тенкě памалла тунă.

ССР Союзěн Çěрěç Халăх Комиссарěн Заместителě БЕНЕДИКТОВ.

ШУПАШКАР

Чăваш АССР Çěрěç Халăх Комиссарне ***МАЛОВА***

Сирěн республикăри Çěрпў районне 1943 çулта выльăх-чěрлěх ěрчетес тěлěшпе Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухнăшăн районри уйрăмах палăрнă работниксене премилеме тата культурăпа йăла ěçěсем валли укçаллă ВИÇÇĚМĚШ ПРЕМИ — 100.000 тенкě памалла тунă.

ССР Союзěн Çěрěç Халăх Комиссарěн Заместителě БЕНЕДИКТОВ

Йěпреç МТС-ěн обязательстви

ЙĚПРЕÇ, апрелěн 30-мěшě. (**Телефонпа**). Иртнě çул социализмлă ăмăртура мала тухнăшăн МТС-а виççěмěш преми памалла тунине илтсенех, колхозсен хирěнче ěçлекен трактор бригадисенче савăнăçлă митингсем пулса иртнě.

МТС-ри пултаруллă трактористсемпе трактористкăсем пěрин хыççăн тепри хěрўллě сăмахсем тухса каланă.

Ултăмěш бригадăна ертсе пыракан П. Я. Маркиянов çапла пěлтернě:

— Эпě ертсе пыракан бригадăри трактористсемпе трактористкăсем савăнăçлă хыпара илтсенех каннă вăхăтра митинга пухăнчěç. Бригада членěсем, пěр кăмăллă пулса, çапла йышăнчěç: трактор ěçěсен çулталăкри планне 150 процентран кая мар, çураки вăхăтěнчи плана 200 процент, комбайнсемпе тумалли ěçе 400 процент тултармалла.

СТЗ маркăллă тракторпа ěçлекен М. М. Михайлова сентябрěн 1-мěшě тěлне плана 200 процент, Е. Сергеева, М. Порфирьева трактористкăсем кашниех 150 процентран кая мар тултарма обязательство илчěç. Ěçěн пахалăхě отлично пулмалла. Тракторсемпе ěçленě çěр çинче кашни гектартан 15-шер центнер тěштырă пухса илессишěн кěрешетпěр.

Мельцов, Иванов юлташсем ертсе пыракан бригадăсем те çулталăклăх плана 150 процентран кая мар тултарма пулнă.

МТС коллективě çулталăкри плана 150 процент тултарма йышăннă, тракторсемпе тунă ěçěн хакне 5 процент чакарма, натуроплата пухассине октябрěн 5-мěшě тěлне пěтěмпех вěçлеме йышăннă. Кăçал иртнě çулхинчен те лайăхрах ěçлесе фронтпа Тăван çěршыв умěнче мухтава тивěçлě пулассишěн трактористсемпе трактористкăсем Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннă.

4.024 гектар акнă

ЕЛЧĚК, апрелěн 30-мěшě. (**Телефонпа**). Районри пур колхозсем те çураки ěçне массăллăн пуçăнчěç. Паянхи кун тěлне районěпе 4024 гектар тырă акнă. Вăл шутра тулă — 2307 гектар, сěлěпе пăри — 1044 гектар, вика — 108 гектар акнă. Ыраш калчи çине 206 гектар клевер акнă.

Тăпрари нўрлěхе тытса хăварас шутпа, 4580 гектар çинче иртнě çул сěртме тунă вырăнсене сўренě.

Ака ěçěсене тунипе пěрлех кěрхи калчасене апат параççě. Пурě 411 гектар çинчи кěркалчисене кайăк-кěшěк тислěкěпе, кěлпе, тислěк шěвекěпе апатлантарнă.

Çураки ěçěсем Хěрлě Ялав илнě Ворошилов ячěпе тăракан колхозра ăнăçлă пыраççě, кунта тěштырăсене акассине паян-ыран пěтěмпех вěçлеççě, пурě 300 гектар ытла акнă та ěнтě. Çавăн пекех «Марс» колхоз — 217 гектар, «Комбайн» колхоз — 154 гектар, Ленин ячěпе тăракан колхоз — 260 гектар тěштырă акнă.

Ака пахалăхě пур тěлте те лайăх. Кашни колхозрах пахалăх инспекторěсем ěçлеççě, пысăк мар кăлтăксем пулсанах ěçе йышăнмаççě.

МТС тракторěсем те ěçе тытăнчěç, çак кунсенче кăна вěсем ака сухине 504 гектар турěç.

Кашни колхозрах Калинин облаçěнчи Краснохолмски районри «Красный путиловец» колхоз членěсем чěнсе каланине сўтсе-явнă. Колхозсем вăйлă тырпул туса илес пирки хăйсем çине çěнě обязательствăсем илеççě. Колхозниксем сдельщинăпа ěçлени ěçěн тухăçлăхне ўстернине кашни колхозрах курма пулать.

В. МАРКОВ,
Райçěрěç пайěн заведующийě.

Кашни колхозник тăрăшса ěçлет

КУКЕÇ. Ворошилов ячěпе тăракан колхоз членěсем вăйлă тырпул туса илессишěн пыракан Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчěç. Паянхи кун тěлне 12 гектар çинчи кěрхи калчасене кайăк-кěшěк тислěкěпе апатлантартăмăр. Çуркуннехи тырăсем акмалли вырăнта иртнě çулхи эрěм ути тěпěсем нумайччě. Колхозниксем вěсене çак кунсенче тасатса тухрěç.

Апрелěн 27-мěшě тěлне 12,5 гектар ака сухи турăмăр тата 5 гектар çине сěлěпе вика акрăмăр. Ака ěçěсем пуçланчěç. Халě кашни колхозникпа колхозница вăйлă тырпул туса илессишěн ырми-канми ěçлет.

Е. ПЕТРОВА,
Ворошилов ячěпе тăракан колхоз председателě.

Ют çěршывсенче

Шведсен Мускаври çěнě посланникě

ЛОНДОН, апрелěн 29-мěшě. (ТАСС). Рейтер агентстви Швецири радио пěлтернине парать. Унта çапла каланă: Швецин ют çěршыв ěçěсен министерствин политика отделěн начальникне Стефан Седерблума шведсем Мускаври çěнě посланникě пулма уйăрса лартнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĚН ĚÇĚСЕМ

ЛОНДОН, апрелěн 29-мěшě. (ТАСС). Официально çапла пěлтереççě: апрелěн 29-мěшěнче ирхине американецсен йывăр бомбардировщикěсен питех те пысăк соединенийěсем Берлинри промышленноçпа çар объекчěсене тапăннă.

Англин информаци министерстви çапла пěлтерет: апрелěн 28-мěшěнче нимěçсен Францири объекчěсене сыхлăшран вěçсе пырса питě вăйлă тапăннă. Тăшман сывлăшра хирěç тăрса вăрçманпа пěрех.

ИТАЛИРИ ВĂРÇА ĚÇĚСЕМ

ЛОНДОН, апрелěн 29-мěшě. (ТАСС). Союзниксен Италири çарěсен главнăй штабě çапла пěлтерет: фронтăн пур секторěсенче те — лăпкă, вырăнě-вырăнěпе патрульсем кěрешнě.

ТУРЦИРИ ПОЛЯК РЕАКЦИОНЕРĚСЕМ СОВЕТ СОЮЗНЕ ХИРĚÇ ĚÇЛЕНИ

АНКАРА, апрелěн 28-мěшě. (ТАСС). Ют çěршыв журналисчěсем çакна кăтартса параççě: юлашки вăхăтра Турцире поляк реакционерěсем Совет Союзне хирěç вăйлăрах ěçлеме пуçланă. Çав çынсен ěçне Турцири поляк посольстви Польшăн телеграф агентствин (ПАТ-ăн) филиалě ура ертсе пырать. ПАТ-ăн Стамбулри филиалě Геббельсăн Турцири органěсемпе тўрех çыхăнса ěçлет. ПАТ-ăн Совет Союзне хирěç калакан нумай пěлтерěвěсене фашистла нимěç агентствисен Турцири филиалěсем сараççě.

Поляк пропагандисчěсен Стамбулри центрě тěрлě кěнекесем, бюллетеньсем пичетлесе кăларать. Çав кěнекесемпе бюллетеньсене ют çěршыв политикěсемпе общество деятелěсене суйса пăтраштарса яма çеç кăлараççě. Курăр пуçне, поляк реакционерěсен шайкки Совет Союзне хирěç тăвакан пропагандистла ěçěнче ют çěршывсенчен кўрекен йышлă «литературăпа» усă курать.

Турцири поляк реакционерěсен Совет Союзне хирěç тăвакан пропаганди кунпа çеç чарăнса тăмасть. Польшăн Анкарари посольствин тата Стамбулри консульствин пур чиновникěсем те, дипломатсен правине усă курса, çавăн пек ěçсем туса пурăнаççě. Совет Союзне хирěç тăтăшах туса пыракан кампание организацилекенсенчен пěри поляксен пресс-атташи Вернер пулса тăрать. Вернер Совет Союзне хирěç ěçлесе пурăннине Турцири ют çěршыв журналисчěсемпе политика деятелěсем лайăх пěлеççě. Политика енчен вăл мěнле çын иккенне çак факт та лайăх кăтартса парать: вăл Польшăн ют çěршыв ěçěсен министрě пулнă Бек полковникěн шанчăклă çынни тата секретарě пулса ěçленě. Тата çакна палăртмалла: поляк реакционерěсем тем тери тăрăшсан та, вěсен пропагандине Стамбулра тата Турцири ытти хуласенче тухакан нимěç кěнекисем тата нимěçсем майлă çырнă кěнекесем çеç сараççě.

ДАНИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, апрелěн 27-мěшě. (ТАСС). Лондонри радио хăйěн Стокгольмри корреспонденчě пěлтернине парать. Çав корреспондент Данире Германие хирěç тăвакан ěçсем йышланса кайни çинчен пěлтерет. Вырсарникун çěрле Копенгагенра тěрлě тěлте 60 хута яхăн взрывсем пулнă. Хула варринче 20 хутчен сăтăрла ěçсем тунă. Вара нимěç çарěсене чěнсе илнě. Нимěç çарěсен стрячě пěр ултă хутлă çурта çавăрса илнě те сирпěнтерсе янă.

СТОКГОЛЬМ, апрелěн 27-мěшě. (ТАСС). Германири радио Гитлерăн Данири уполномоченнăйěн Бестăн заявленине панă. Бест çапла каланă: «Данири вăрттăн ěçлекен çынсем каллех Германи интересěсене хирěç пыма пуçларěç, Германин çар çыннисене тапăнаççě, диверсантсем Германин çар руководствин интересěсене сиен тăваççě», тенě. Вăл Данири патриотсен сăтăрла ěçěсемшěн заложниксене йышлăн вěлерессине хăратнă.

ГЕТЕБОРГ, апрелěн 29-мěшě. (ТАСС). «Гетеборгс постен» хаçат çапла пěлтерет: Данирен тарса килнě çынсем каланă тăрăх, Копенгагенра тата Данири ытти хуласенче нимěçсен хěçпăшаллă патрулěсем урамě-урамěпе хупăрласа илеççě те пур çынна та ухтарса тухаççě. Нимěç патрулěсене гестаповецсемпе шальбурговецсем (Данири фашистсем) пулăшаççě. Урамсенче Германи танкěсем çўреççě: юлашки кунсем хушшинче кăна Данире пурăнакан 2.000 çынна яхăн тытса хупнă. Германи террорě вăйлансине ответлесе, Копенгагенри халăх хулари пур кинотеатрсенче те пěр вăхăтрах демонстраци тунă. Дани патриочěсем кăтартнă сехетре кинотеатрсене Гитлера мăшкăллакан кинолента илсе пынă та кинооператорсене кинора çав лентăна кăтартма хушнă. Сеанс пěтнě чухне экран çинче Дани халăхне Германие хирěç кěрешме чěнекен лозунгсем курăнса кайнă. Кинори çынсем çав лозунгсене тăвăллăн алă çупса кěтсе илнě, Данин наци гимнне юрласа янă. Тепěр кунне Германи влаçěсем пур кинотеатрсене те хупни çинчен пěлтернě. Урамсенче патрульсен йышне ўстернě, мěншěн тесен гитлеровецсем халăх хумханассинчен хăранă. Юлашки икě кун хушшинче Германие хирěçле пысăк ěçсем 70-е яхăн тунă. Урамсенче нимěçсемпе Дани çыннисем хушшинче юнлă тытăçусем пулса иртнě.

Апрелěн 26-мěшěнче Германин оккупацилле влаçěсем çакăн пек приказ пичетлесе кăларнă: каçăн çумěнче е хăватте рěнче пăшал тупаççě, çавна персе вěлермелле. Вěлерессе урамсенче халăх умěнче вěлермелле, тенě.

КĚСКЕН

▲ Апрелěн 26-мěшěпе 27-мěшěнче Англи авиацийě Бирма çыранě патěнче Япони суднисене тапăннă. Японин юханшывсем тăрăх çўрекен 34 суднине тата нумай баржине пěтерсе тăкнă.

▲ Апрелěн 27-мěшě ыран тенě чух çěрле Англи бомбардировщикěсем Бискай заливěнче тăшман суднисен караванне тěл пулнă. Бомбăсем пăрахса, çав караванна саппаласа янă. Тăшманăн 2 минăйтральщикне вут тивертсе янă.

Илья Тукташ.

Ылттăн Çăлтăр

Çарлака та мухтавлă эс, Тăван çěршывăм! [illegible] танă хěççем тытса, хура тăшмана хирěç хаяр çапăçăва тухрăмăр. Эсě пирěн хушăмăртан куксерен çěнěрен-çěнě геройсем çуратса кăларатăн.

Ěмěр сўнми хěвел пек ялкăшса тăраççě чаплăран те чаплăраххисен ячěсем халăх умěнче. Вěсен çарлака кăкрисене Ылттăн Çăлтăрсем çутатаççě. Вěсен чаплă ěçěсемпе пěтěм çěршыв мухтанать.

Чăваш халăхěн паттăр ывăлě Иван Кузьмич Поляков çамрăк-ха. Вăл çирěм икě çулта кăна. Апла пулин те вăрçăра чапа тухма ěлкěрчě вăл. Пин-пин тěслě чечекпе витěннě сарлака Кубань çеçенхирěнче, Ростов—Сталинград чугун çулě хěрринче, Сталинград районěнче нимěçсене хирěç арăслан пек çапăçрě вăл, Çěмěрле районěнчи Кăмаша каччи.

...Поляковсен чаçě хěрěх çухрăм васкавлă маршпа килчě те каç пуласпа аслă Днепр хěррине çитсе тухрě.

Вата Днепр урлă каçма командовани приказ панă ěнтě. Боецсем хěрўллě хатěрленеççě. Нимěн шăв-шавсăр, сас-чў кăлармасăр хатěрлеççě салтаксем хăмасене пěренесенчен, алăксемпе хапхасенчен сулăсем, кěсменсем. Тěплěн тěрěслерěç алла шанса пана хěçпăшала. Миномётсемпе станковăй пулеметсене пысăкрах сулăсем çине вырнаçтарчěç. Унтан вара, пěтěм

Вăрахăн-вăрахăн, пěр сас-чў кăлармасăр ишсе пыраççě вěсем. Акă малти сулăсем юханшывăн сурма-сурринчен те иртрěç. Хыçалтисем те сылтăм çыран хěррипелле çывхарнăçемěн çывхарсах пыраççě.

Пирěн боецсем çыранăн тепěр еннe тухрěç. Днепрăн сылтăм енě—чуллă та чăнкă сăртлă. Чăваш халăхěн мухтавлă ывăлě Иван Поляков никамран малтан чупса хăпарчě çав чăнкă çыран хěррине. Вăл пуçне çěклесенех хăй çинелле пěр нимěç салтакě талпăнса килнине курчě. Поляков хăвăртрах автоматне çěклерě.

—Ме, чых, сăвăслан, совет кучченеçне! Чыхлан хăвăн хура юнупала.

Пěррех туртса ячě Иван Поляков шăнчăклă автоматне кěске черетпе. Нимěç çавăнтах, аллисене сарса пăрахса, çěре тăрăнчě.

Пăхать Поляков сылтăм еннелле — курах каять: тата тепěр фриц ыткăнса килет иккен ун çинелле пир тукмакки пек граната тăратса. Тăван çěршывшăн çапăçакан совет салтакě аллинче автомат нихăçан та чěтремест. Ку нимěçěн шăпи те малтанхин пекех тулчě.

Çак кěске самант хушшинче ытти боецсем те çыран хěррине хăпарса çитрěç. Йěри-тавра мина-снарядсем çурăлаççě. Çěр чěтресе тăрать. Анчах совет çыннин паттăрлăхне ниепле хăрушă вут та тытса чараймасть.

Акă хăватлăн «урра» кăшкăрни илтěнсе кайрě. Иван Поляков автомачěпе сулса малалла ыткăнчě.

—Тăван çěршывшăн! Аслă Сталиншăн!

Днепрăн мухтавлă паттăрěсем хěвел тухса сарăличченех хăйсен плацдармěсене аслăлатса пычěç. Кăнтăр тěлнелле çапăçу калама та çук хěрсе кайрě. Икě сехет çурă çапăçнă хыççăн пирěн паттăрсем нимěçсене вичě ялтан çапса кăларчěç.

Поляковсен чаçě аслă тўремлěхе тухрě. Тавралла хěвелçаврăнăшěпе кукуруз уйěсем кашласа лараççě. Нимěçсем, техникăпа çар хатěрěсене пăрахсах, чакса тараççě каялла, çул çинчи тусана хурапа шăварса.

...Сўллě кукуруз хушшинче икě пулемет çатăртатать. Вěсем пирěн боецсене малалла кайма хытă чăрмантараççě. Рота командирě Иван Поляковa приказ парать:

— Пулемет точкисене пусарса лартмалла!

Поляков хăйпе пěрле сакăр граната виçě диск автомат патронě илчě те тăшман пулемечěсем патнелле шума тытăнчě. Хăйне вăл питě лайăх маскировка тунă писиххийě хушшипе кукуруз тунисемпе хěвелçаврăнăш пуçěсем чиксе тултарнă.

Пěр шуса çěклемесěр, вăрахăн-вăрахăн шăвăнать малалла Днепр паттăрě Иван Поляков. Акă пěрремěш пулемет патне çирěм пилěк метра шăвăнса çитрě. Ерипен пуçне çěклесе пăхрě. Тěрěс: шăпах тăшман йăви.

— Мейăр! Чыхăр!—умлăн-хыçлăн виçě граната вăрхăнтарчě Поляков. Пулемет расчечě сывлăша сирпěнчě. Иван Кузьмич пулемет патне пычě те гашетка çине пусса пăхрě. Пулемет ěçлемест—осколок тивнипе приемник арканнă.

Халě ěнтě тепěр пулемечěпе те тытăçма юрать. Ун патне çитме—пěр ултçěр метр яхăн. Малтанхи пекех çěр çумне лăпчăнса, çак хушша икě сехете яхăн хырăмпа шуса тухрě Поляков. Тăшман ăна асăрхаймарě те. Унтан вăл каллех сур кěлеткипе кăштах çěкленчě те пулемет çине икě граната ывăтрě. Сывлăш хумě питрен килсе çапрě Поляковa. Тат-ти-сыпписěр туллашса ларакан пулемет шăпах пулчě.

Пăхать Поляков — ку пулемечě çěмěрěлмен. Вăл çавăнтах ăна тепěр майлă çавăрса лартса, унпа хыçалтан айхашăнса килекен фрицсене çулма пуçларě. Лешсем, нимěн ăнланаймасăр, çěрелле йăванаççě.

Поляков пěр лентăри патронсене пěтěмпех персе пěтерчě. Унтан çěрелле пăхрě те тепěр ултă лента, пěр пуçланман ещěк ларнине курчě. Унăн чěри савăнсах кайрě: «Çитрě фрицсем валли çěрри кучченеç. Хăйсемшěн хăйсемех хатěрленě». Поляков ещěке уçса пăхрě. Унта туллиех граната выртать иккен.

Çак вăхăтра фашистсем, сулахай флангран контратака пуçласа ярса, пирěн ротăна чылаях каялла хěссе кăларнă. Пăхать Поляков йěри-тавралла — ăна пур енчен те нимěçсем хупăрласа илнě. Мěн тăвас? Юлашки юн тумламěччен çапăçас!

Иван Кузьмич нимěç пулемечěпе гранатăсене пěр высотари пысăках мар окопа вырнаçтарса лартрě те кěтме пуçларě. Халě ěнтě гитлеровецсем лайăхах тавçăрса илчěç мěншěн хăйсен пулемечěсемех хăйсене çав тери ăшалантарнине. Тавçăрса илчěç те, чăрсăр совет паттăрне мěн пулсан та чěрěллех алла лектерме ěмěтленсе, Поляков çине атака хыççăн атака тума пуçларěç. Пилěк атакине те сирсе ячě паттăр воин нимěçсенчен тытса илнě пулеметпа.

Анчах юлашкинчен унăн патронсем пěтсе çитрěç. Фашистсем çакна сисрěç. Халě вěсем нимěн хăрамасăрах пěчěк сăртран окоп çине кěшěлтетсе килеççě. «Эй, Тăван çěршывăмçăм-аннем! Вăйхăват пар хăвăн ывăлна çак вăрхурахсене аркатма,—пăшăлтатать Иван Кузьмич типсе-çунса кайнă тутисемпе. Кун каçипе пěччен темиçе пин фашиста хирěç çапăçнă пулин те, унăн вăйě пěтмен-ха. Ăна çак самантра Тăван çěршыв вăйхал парса тăрать.—Ирсěр çěлен-калтасем кěтěвě валли гранатăсем пур; гранатăсем пěтсен—икě тěреклě алăм пур; алăсем çěклеймиçпулсан, кашкăрăнни пек çивěч шăлсем пур; шăлсем те витеймиçпулсан вара... ан тив, юлашки юн тумламěсем тăван çěр кăкри çине тумлаччăр». Çапла тупа турě Поляков!

Фашистсем Поляков окопне икě енчен хупăрласа илчěç. «Рус капут! Рус, капут!»—тесе кăшкăрса, хупăрлама пуçларěç. Поляков сухалса каймарě. Икě еннелле те чěртлěн гранатăсем вăркăтса тăрать вăл йěрěнчěк фрицсем çине.

...Пěчěкçě окоп çумěнче кукуруз çулçисем чăштăртатса илчěç. Поляков, шартах сиксе, пуçне çěклесе пăхрě те, батальон писарěпе рота командирě Захаренко хăй патне хырăмпа шуса килнине курчě. Вěсем иккěшě те Поляковa ытаçласа илсе хытă-хытă чуптурěç.

— Эсě-и, тăванăм!

Поляковăн пичě тăрăх савăнăç куççулě юхса анчě. Захаренко кěсъинчен таса сăмса тутри кăларса унăн куççульне шăлса илчě.

— Эсě чăн-чăн герой халăх геройě, тусăм,—терě вăл.

Вěсем окопран тухса малалла шăвăнма пуçларěç. Анчах та шăп çак самантра ăнсăртран инкеклě мина шăхăрса килчě те сывăхарах çурăлчě.

— Хăвăртрах выртăр, юлташ командир, — сăмах хушма ěлкěрчě Поляков. Анчах Захаренко ун сăмахěсене илтеймерě. Вăл çавăнтах вăйсăррăн çěре кайса ÿкрě.

— Лăпкăн çывăр, юратнă командир, хаклă тăван, çывăх юлташ Захаренко...

Поляков, лейтенантăн шурса кайнă çамкинчен чуп турě те, автоматне çěклерě.

— Ман хыççăн, тантăш-гвардеецсем! Ротăна эпě ертсе каятăп! — янраса кайрě унăн хăватлă сасси.

Боецсем пурте хăйсен çěнě командирě хыççăн малалла, хěвеланăçнелле ыткăнчěç. Çак çапăçура Иван Кузьмич Поляков хăй пěччен 259 фашиста вěлерчě. 1943 çулхи октябрěн 26-мěшěнче Правительство Поляковa Совет Союз Геройěн ятне панă.

Чăваш халăхěн паттăр ывăлě Иван Кузьмич Поляковăн сарлака кăкри çинче Ылттăн Çăлтăр, Ленин орденě, виçě медаль ялкăшса тăраççě.

Ответлă редакторăн ěçěсене тăваканě П. Н. НИКОЛАЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĚ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактора́н — 0—67, заместительпе секретарěн — 4—26, парти пурнăç пайěн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайěсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00114 Типографи Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59×42 п. л Тираж 14.400 экз